Сывлăх сыхлавĕн ыйтăвĕсемпе

# «Кунтан чунпа çĕкленсе тухатăн»

– Спаççипах сана, хĕрĕм. Ура çине пусаймиех пулса çитнĕччĕ. Çĕнĕрен ура «туяннă» пекех пулса кайрĕ, – хĕпĕртенине пытармасть кинеми. – Хĕрачисем тата ытла кăмăллă-çке.

Чăннипех те, миçе çул пурăнатăп Муркашра, никамран та районти тĕп больницăри физиотерапи уйрăмĕнче ĕçлекенсем пирки хурласа-тиркешсе калаçнине илтмен. Мĕнле чирпе чирленĕ, мĕн тĕрлĕ кăмăллă çын пулмасть пулĕ - кашнинех тараватк кĕтсе илеççĕ, тухтăр çырса панă сиплеве кирлĕ пек пурнăçлаççĕ, ăшă кăмăлпа ăсатса яраççĕ.

Ахальтен каламаççĕ çав шур халатлă сывлăх хуралçисем эмелпе кăна мар, сăмахпа та сиплеççĕ, тесе. Кунти чĕрĕ чечексем ăшне путнă тирпейлĕ те хăтлă пӳлĕмре чуна темле тӳрех лăпкă пулса каять. Илемлĕ кĕвĕ янăраса каять те – сиплев вăхăчĕ иртсе кайнине те сиссе юлаймастăн.

Ырă ята Н.Ф. Куликов ертсе пыракан коллектив тивĕçлĕ ĕçпе çĕнсе илчĕ.

**Маларах каласа хăварам.** Чăваш Патшалăх университетĕн медицина факультечĕ хатĕрленĕ чи малтанхи тухтăрсенчен пĕри пулнăскер, ĕç биографине Николай Филиппович Сĕнтĕрвăрринчи тĕп больницăра пуçларĕ. 1973 çулччĕ ун чух. Тепĕр ик çултан пултарулла хирурга района чĕнсе илчĕç. 1977-1979 çулсем вара – районти тĕп больницăн тĕп тухтăрĕнче ĕçленĕ çулсем, кайран чылайччен хирургра вăй хучĕ. Куçне амантнине пула 1983 çулта физиотерапевт пулса ĕçлеме пуçланăранпа мĕн чухлĕ улшăну тумарĕ пулĕ вăл кунта?

Çулталăк маларах ача-пăча больницин кивĕ çуртĕнчен хальхи вырăна куçса килнĕ физиотерапи уйрăмĕнче 1-3 аппарат анчахчĕ. Паян вара 30 çитрĕç вĕсем. 4 медсестра тапăртатса çеç тăраççĕ чирлисем умĕнче. Стационарта вырт такансене те, килтен килсе çӳрекенсене те кăмăлтан сиплеççĕ вĕсем. Л.А. Жиганова 1978 çултанпах сывлăх хуралĕнче: ача-пăча больницинчи медсестра кунта куçиччен ача



сачĕн воспитательницинче ĕçлесе илчĕ. Чунĕ медицинăнах туртрĕ пулĕ çав. Физиотерапи пӳлĕмĕн аслă медсестри кăмăллă паян хăй çак професие суйласа илнипе.

–Ĕçре кун иртни те сисĕнмест, – тет вăл.

Юратнă ĕçри стажĕ Е.А. Романован та сахал мар: 1983 çултанпа чирлисене сиплет вăл. Е тата 22 çул ĕçлекен В.Г. Тихонована кам пĕлмест пулĕ? Çак хушăра миçе çĕр çынна ырă тумарĕ пулĕ вăл. 1993 çултанпа ку уйрăмра ĕçлеме пуçланă А.Ю. Денисован та кĕске хушăрах пуçтарăнчĕ ĕç опычĕ. Кăçал вăл тата ача-пăча массажистне вĕренсе килчĕ. Халь ĕнтĕ кунта ача çуралсан эрне иртсенех массаж тăваççĕ. Л.Ф. Федоровăпа Л.С. Яковлева санитаркăсем те хăйсен тивĕçĕсене кирлĕ пек пурнăçлаççĕ.

Массаж тенĕрен, кунти медсестрасенчен кашниех маçтăр ăна тума, кунти пур аппаратпа та куç хупса ĕçлеме те пултараççĕ вĕсем.

– Алă-урана хуççан та реабилитацине кунта килеççĕ, Сипленĕ хыççăн алă-урасем лайăх ĕçлеме пуçлаççĕ. Е тата ача сусăрăнса çуралнипе ури çине пусаймасть. Çутăпа та сиплеççĕ, массаж та тăваççĕ тата ытти те. Физиотерапи мелĕсемпе сипленнĕ хыççăн çирĕппĕн ура çине пусма пуçлаççĕ пĕчĕк шăпăрлансем, – тет Николай Филиппович. – Неврологи, хирурги чирĕсенчен те сиплеççĕ: физиотерапи уйрăмĕнче мĕнле чиртен сипленине пурне те асăнса та пĕтерейместĕн.

–Куççульпе килсе йăл кулăпа каяççĕ ку пӳлĕмрен, – Николай Филипповичăн çак сăмахĕсем физиотерапи уйрăмĕн ĕç результатне хакланиех пулать.

Мĕн кăна тумаççĕ пулĕ кунта: çутăпа, магнитпа, лазерпа, ультрасасăпа, электричествăпа, ăшăпа сиплеççĕ, ингаляци, массаж тăваççĕ т. ыт. те. Ку çеç те мар – 1986 çултанпах озокеритпа (ту ăвăсĕ) сиплеççĕ. Унччен унпа республикăри больницăра Басов тĕп физиотерапевт çеç усă курнă. Бориславльти рудасем каларакан управленинчен çутçанталăк пархатарне чи малтан ăна пĕлĕшĕ командировкăна кайсан 2 брикет илсе килсе пачĕ.

Çĕнĕлĕхсем татах та пулчĕç: 1983 çулта районĕпех физиотерапи сетьне сарчĕç. Районти тĕп больницăри çак уйрăм 158 тăв. метра çитрĕ. Паян районти пур участок больницинче те (Турайра, Йӳçкассинче, Мăн Сĕнтĕрте) тата пĕтĕмĕшле практика врачĕн пур уйрăмĕнче те физиотерапи пӳлĕмĕсем ĕçлеççĕ. Вĕсенчи оборудовани те паянхи куна тивĕçтерекенниех.

1999 çулта (ун чух Николай Филипповича тепĕр хут тĕп тухтăра лартрĕç) çак физиотерапи пӳлĕмĕнче радиоузел ĕçлеме пуçларĕ. Районти тĕп больницăри кашни уйрăмри палатăсенчех итлетчĕç тухтăрсем вăл е ку темăпа тухса калаçнине. Лăпкă та илемлĕ кĕвĕ те чирленисемшĕн симпыл вырăннех.

Нумаях пулмасть кĕртнĕ тепĕр çĕнĕлĕх вăл – «Сывлăх» наци проекчĕпе килĕшӳллĕн физиотерапи уйрăмне валли çĕнĕ йышши аппарат – биоптрон килсе çитни. Çак аппарат лазерпа сипленĕ пекех сиплет çутăпа, анчах унăн пайăркисем ультрафиолетовăй пайăркасем пек пĕçертмеççĕ, ӳт те хĕвел çинче пиççе хуралнă пек пулмасть.

Районĕпе вара физиотерапи пӳлĕмĕсенче пĕтĕмпе 185 аппаратпа пурĕ 16 медсестра ĕçлет. Çулталăкне 160 пин процедура туса ирттереççĕ, 10 пине яхăн çынна сиплеççĕ.

Районти тĕп больницăри физиотерапи уйрăмĕн çитĕнĕвĕсем çинчен калаçнă май кунта хальхи коллективччен нумай çул ĕçленĕ медицина ĕçченĕсене асăнмасăр хăварни те тĕрĕс мар пулĕччĕ. З.А. Можаева, Р.Р. Родионова, П. Михайлова тата ыттисем чăннипех ырă сăмаха тивĕç.

Сывлăх сыхлавĕн малашлăхне физиотерапи уйрăмĕн ертӳçи Н.Ф. Куликов çапла курать:

–Çĕнĕ больница пулсан, чирлисене пылчăкпа, шывпа сиплеме тытăнсан мĕнле лайăх пулмалла, – ĕмĕчĕпе паллаштарать вăл.

Пурнăçланччăрах çав ĕмĕтсем. Районти сывлăх сыхлавĕн отраслĕ малалла та палăрмалла утăмсем тутăрах. Вара физиотерапи уйрăмĕнче сипленекесем татах та кăмăллăрах пулĕç.

**Л.ПАВЛОВА.**

**Сăн ӳкерчĕкре: районти тĕп больницăри физиотерапи уйрăмĕн коллективĕ.**

**Военный комиссариат Моргаушского и Аликовского районов Чувашской Республики**

**приглашает граждан, пребывающих в запасе, годных по состоянию здоровья, в возрасте от 20 до 40 лет, отслуживших военную службу в рядах СА и РА, для поступления на военную службу по контракту в 15 отдельную мотострелковую бригаду миротворческих сил Российской Федерации пос. Рощинский, Самарской области, для службы в зоне Чрезвычайного Положения (Южная Осетия).**

**Условия военной службы:**

**1. Контракт граждане могут заключить на срок от 6 месяцев до 12 месяцев, по желанию можно на 3 года;**

**2. С момента зачисления в списки личного состава каждый прибывший военнослужащий по контракту проходит обязательную доподготовку в учебном центре штатного подразделения на штатной должности. По окончании доподготовки в составе штатного подразделения направляется в пункты постоянной дислокации части.**

**3. Выслуга лет для начисления пенсии исчисляется из расчета 3 месяца за 1 месяц службы.**

**4. Размер денежного довольствия высокий – 30 тысяч рублей и выше.**

**Предусмотрен полный соцпакет.**

**Трехразовое питание.**

**Бесплатный проезд к месту проведения отпуска совместно с членами семьи военнослужащего, а также предусмотрены дополнительные выплаты:**

**– единовременное денежное пособие при заключении контракта;**

**– ежегодная материальная помощь в размере 2-х окладов денежного содержания;**

**– единовременное денежное вознаграждение в размере 3-х окладов по итогам года;**

**– предоставление жилых помещений для проживания;**

**– обеспечение санаторно-курортным лечением на себя и членов семьи военнослужащего;**

**– ежеквартальная премия.**

**Распространяются также все социальные гарантии, предусмотренные действующим законодательством.**

**При получении ранения (тавм, увечья) на службе предусмотрено страховое обеспечение: 10 месячных окладов – за тяжелое ранение, 5 окладов – за легкое.**

**За получением более подробной информации обращаться в военный комиссариат Моргаушского и Аликовского районов по адресу: с. Моргауши, ул. Гагарина, д. 10. Тел.: (8-835-41)-2-13-50; 2-17-01; 2-11-89.**

Ырă ĕçсен çулталăкĕ

# Ырă тума йывăр мар

Пирĕнтен никам та малашнехи шăпа мĕнле килесси пирки пĕлмест. Каршлăхри ветерансен интернат çуртĕнче пурăнакансем те яш чухне ватлăха кунта ирттересси



çинчен тĕлленмен те. Çук, çук, кунта япăх мар вĕсене. В.А. Крючкова культорг тăрăшнипе вĕсен пĕрре те тунсăхлама вăхăт çук. Нумаях пулмасть ав Шупашкарти трактор тăвакансен керменне Александр Васильев концертне кайса курчĕç. Пурте кăмăллă пулчĕç.

Кăмăл тенĕрен, ăна та май килнĕ таран тивĕçтерме тăрăшать Валентина Анатольевна. Кунта пурăнакан 20 çынран пĕри – Н.П. Павлов – пĕррехинче хăй çуралса ӳснĕ тăван Канаш тăрăхне кайса килес шухăшлине пĕлтерчĕ. Кунта лекессе те вăл шутламан-туман çĕртен лекрĕ. Хăй юратнă хĕрарăмпа 35 çул пĕрле пурăнчĕç вĕсем. Ачасем пулмарĕç. Ватлăх енне сулăнсан, шалкăм çапрĕ Николай Павловича, вырăн çинчен тăраймарĕ. Мăшăрĕ ăна пăхса пурăнса нушаланас темерĕ-ши? Пурпĕрех вăл ура çине тăраймĕ, терĕ-ши? Çапла арçын Каршлăхри ветерансен çуртне лекрĕ. Ăшă кăмăллă медицина ĕçченĕсем тăрăшнипе Николай Павлович ура çине тăчĕ-тăчех. Нумаях пулмасть пĕрремĕш хут уявланă Çемье, юрату тата шан-



чăк кунĕнче культорг ăна ачалăх иртнĕ вырăна илсе кайса килчĕ. Тăван ялĕнче вăл пурăннă вырăнта халĕ çурт пушă ларсан та çунат хушнăн туйрĕ хăйне ветеран. Канашра хăй виçĕ теçетке ытла пĕрле пурăннă юратăвне курас килни те ĕмĕтрех юлмарĕ. Кайрĕç унта. Савăнчĕ мăшăрĕ те. Малтанхи мăшăрĕпе çуратнă хĕрĕ килсен, пĕрле Каршлăха килсе кайма пулчĕ.

Ырă ĕç вăл вĕçĕ-хĕррисĕр çав. Ветерансен çуртĕнче пирĕн районтан пурăнакан 3 çынран пĕри – Мăн Сĕнтĕр шкулĕнче ĕмĕрĕпех ачасене вĕрентнĕ Л.А. Васильева. Ачасене тĕрĕс воспитани пани куç кĕретех. Юратнă учительницин пурнăç çулнех суйланă С.А. Леонтьева часчасах хăйĕн класĕпе Каршлăха концертпа килет.

Е тата Мăн Сĕнтĕрти В.Г. Васильева илер. Хăйĕн пилорама унăн. Кирлĕ чухне Каршлăхри ветерансен çуртне хăмасем парса пулăшать. Мăн Сĕнтĕрти тĕслĕхлĕ библиотека заведующийĕ С.Г. Соколова пĕр хутчен кăна мар кĕнекесем парнелерĕ интерната.

Эсĕ вара, вулаканăм, кăçал Ырă ĕçсен çулталăкĕнче мĕнле ырă ĕç турăн?

**Л. ПАВЛОВА.**

**Сăн ӳкерчĕксенче: савăнтарма нумай та кирлĕ мар çынна.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

ООО ЮК «АЛМАЗ-ХОЛДИНГ»

продолжает реализовать ювелирные изделия и украшения.

На сегодняшний день у нас действуют скидки:

Акция «С днем рождения» – 15 проц.

«Молодожены» – 10 проц.;

«Счастливый час» – 7 проц., с 14 до 15 часов.

А также в продаже имеются подарочные сертификаты.

Мы вас ждем по адресу: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 4, Дом быта, 1 этаж.